Инв.
№=358
33-170

С. П. ПЕТРОВ

# ҪУРАКИ КӖРЕШӖВӖНҪЕ ШУПАШКАР РАЙОНӖ МАЛТИ ӖРЕТЕ ТУХРӖ

Кӳкеҫри район миттӗнкӗнҫе майӑн 8-мӗшӗнҫе тухса каланинҫен

В борьбе за весенний сев Чебоксарский район встал в передовые ряды.

Хакӗ 20 пус.

Ҫӑвашистат 1933

# Ҫураки кӗрешӳвӗнҫе Шупашкар районӗ малти ӗрете тухрӗ

(Кӳкеҫри район миттӗнкӗнҫе тухса каланинҫен).

Йулташсем! Есӗр куҫта ҫураки ӗҫӗсене тӗпҫесе тухма тата малашнехи сатаҫсене палӑртма пуҫӑннӑ.

Пирӗн ҫакна хытӑ асӑрхамалла. Кӑҫалхи ҫураки иртнӗ ҫуракисенҫен уйӑрлса тӑрать. Унӑн уйрӑмлӑхӗ ҫакӑнта пулать. Епӗр кӑҫал иккӗмӗш петтилеткӑн пӗррӗмӗш ҫуракине иртеретпӗр. Ку ӗнтӗ ҫакна пӗлтерет. Пӗрремӗш пӗттилеткӑ вӗҫне СССР ҫукӑнпа вӑтам хресҫенсен тӗп массине коллективисатсилесе ҫитернӗ. Тырпул тӑвакан тӗп районсенҫе колхоссем йалхуҫалӑхӗнҫе пуҫ пулса тӑрӗҫ. Колхоссен производствӑпа техникӑ никӗсӗ ӳсрӗ. Совхос строиттӗлстви сарӑлса пырӗ. Ҫаксем вӗсем йалхуҫалӑхне ма-

лалла хăпартса пыма, промышлĕннăçăн ҫĕртавар никĕсне тĕреклетме, рапоҫҫи снапшенине, пĕтĕм ĕçхалăхĕн пурнăçне аванлатма кирлĕ майсем туса паҫĕç.

Есĕр пĕлеттĕр, ПСК(п) П 17-мĕш конференгсийĕ,—халăха тĕп потрепиттĕл таварĕсем тăратасси, вăл шутрах çимĕçсем те тăратасси иккĕмĕш петтилеткăн вĕçĕнҫе пĕррем̆ĕш петтилеткăпа танаштарсан 2—3 хутран кайă мар ӳсмелле,—тесе йышăнса хăварҫĕ. Çак сатаҫапурнăçласси, ҫи малтан, йалхуçалăхне таттисĕр хăпартса пыниҫен килет. Çавăнпа ĕнтĕ 17-мĕш конференгси, иккĕмĕш петтилеткăн йалхуçалăхĕнҫи тĕп сатаҫĕ колхоспа совхос уйхирĕсен тырпул тухăçне пысăккăн хăпартасси, уйăр çапталăкпа кĕрешессине полҫшевикла татасси, выҫăх-ҫĕрлĕх ыйтувне тĕпрен илсен татса хумалла тумаллăх кĕтӳсене ӳстерессИ, тата тавăрлă протуксн ӳсĕмне вăйлатасси пулат, терĕ. Пирĕн парттипе правиттĕлствă йалхуçалăхне хăпартас ĕçе пĕтĕм вăйа хуни çакăнтан пит те палла,

Кăçалхи çуракин уйрăмлăхĕ çакăнта пулать ĕнтĕ.

Пирĕн çĕршыв тĕнҫипе ҫи вăйлă, ҫи хăватлă, ҫи тĕреклĕ пролеттариллĕ тершавă пулса тăҫĕ. Ĕçсĕр тăрса йулнисем, выçлăхпа пусмăрта пурнакансем пĕр пирĕн çĕршывра кăна çук. Ĕçсĕр йулнисем сукки, выçлăх сукки тĕнҫипе те пĕртен пĕр çĕршыв кăна, вăл пирĕн çĕршыв, вăл СССР. Пирĕн çĕршывра кам тăрăшса тўрĕ ĕçлет, вăл çăкăр-тăварлă.

8 кун кайарах кăна майăн 1-мĕшне—кĕрешўпе çĕнтерў праçникне уйавласа иртертĕмĕр. Ку кун Совет сойусĕн столитсинҫе—Мускавра рапоҫҫисемпе хресҫенсен Хĕрлĕ çарĕн вăйхăватне кăтартрĕç. Кунта танксем, пропеллĕ машинсем, танкеткăсем, тупăсем, пулеметсем, сасă тытакан машинсем, коннитсă т. ыт. те. Мускав çинҫе сывлăшра темиçе çĕр самолҫот вĕçнĕ. Паратра 50 пинлĕ çар пулнă. Парата тухнă çарăн уйрăм пайĕсем саланса пĕтме ĕлкерĕймен, пуршуаллă пиҫетĕн претставитĕлĕсем хăйсен хаçаҫĕсене „Ок-

ĕçпе революци пулнăрашпа кун пек хăватлă парат пулман", „сехре хăпăтмалла вăйлă парат пулса иртрĕ" т. ыт. те пĕлтернĕ.

Йапонипе Китай хушшинче вилĕмлĕ вăрçă пырать. Капиталиссем колонисене çаратаççĕ. Колонисенче империалисла çарсемпе пусмăрта пурнакансен хушшинче таттисĕр вăрçă пырать. Капиталисла патшалăхсем пĕр-пĕрипе пĕрмайах хирĕçеççĕ. Америкăри вăйлă капиталисла патшалăх, ăна нимĕнле крисĕс та витерейрес çук, тесе калаçаççĕ сылтăм оппортунисла ĕтемсем. Крисĕс Америкăна çĕлен пек пăвса илчĕ. Халь тĕнчери ылттăн хуçин ылттăн çитмест.

Крисĕс тĕнчипе вилĕм пек хăрушă çÿренĕ вăхăтра Совет союсĕ нимĕнле крисĕс те пĕлмест, вăл хайĕн хăватне тĕреклетсе пырать. Лăпкăн ĕçлеме пире мĕн, кам май парать? Совет правиттĕлствин килĕшÿллĕ политтĕкĕ. Пĕрремĕш пиллĕкçуллăн историллĕ çĕнтерÿвĕсем, уйрăмăнах шултра инатустри тĕреклевни. Йулашкинчен, пирĕн Хĕрлĕ çар. Революцисемпе

хресҫенсем комуниссен партти йертсе пынипе влаҫа ҫиррӗп тытаҫҫӗ, хӑйсен тӑван влаҫне пӗрмайах тӗреклетсе пыраҫҫӗ.

Ҫак трипунӑ ҫинҫен пӗр прикагиршӑ тукса каларӗ. Вӑл проступ ҫӗлхепе ҫӑваш хӗрарӑмӗн паттша саманиҫи пурнӑҫне, унтан колхос умӗнхи пурнӑҫа каласа паҫӗ. Вӑл калаҭ,—колхос орканисатсилеме ҫӑмӑл пулмарӗ, кулаксем нумай ҫӑрмантарҫӗҫ. Епӗр ҫӑрмантаракансене тапса сиктерсе колхос ҭурӑмӑр!

Капиталисля патшалӑхсенҫе хӗрарӑмсене хаҭ те сын вырӑнне шутламаҫҫӗ, вӗт. Унта хӗрарӑмсем тавар вырӑнӗнҫе, вӗсене сутаҫҫӗ, илеҫҫӗ, вӗсенҫен тем тӗрлӗ машклаҫҫӗ, вӗсене пусмӑрта усраҫҫӗ.

Пирӗн йӑвӑрлӑхсем ҫук мар. Анҫах вӗсем епӗр кайалла ҫакса пынинҫен мар, малалла ӳссе пынинҫен килеҫҫӗ. Ҫи пысӑк йӑвӑрлӑхсене пурӑнса иртерпӗ. Пирӗн уӑлҭ ӗнтӗ хамӑр пурнӑҫа лайӑхлатма пур майсем те пур. Тӑрӑшса тӳрӗ ӗҫлени кӑна кирлӗ. Пат-

ша самаиивҫи ҫăвăшсен пурнăҫне аса илĕрхе. Ун ҫух ҫăвашсене ҫырма-ҫатрасене вăрмансене хăваласа кӳртнĕ. Хут пĕлмен, ҫурриве йахăн трахомпа асапланнă, ҫĕршер пинĕн суккăр пулса ларас хăрушлăх умĕнҫе тăнă, тăранаҫҫен ҫăкăр ҫимен, нумайĕшĕсем хăйсен килĕнҫен тухса курман, уретник вухалине тӳссе пурăннă, йĕри тавра вҫаткă пулнă, т. ыт. те.

1929-мĕш ҫулҫенех пирĕн хамăр вăрлăх ҫитмен, пулăшу вăрлăхĕ илсе тăнă. Халь мĕнле танаштару пур? Нимĕнле танаштару та ҫук. Пурнăҫ тĕпренех улшăнҫĕ. Пусмăрпа мăшкăл пурнăҫĕ выранне савăнăҫлă ҫутă, тулли пурнăҫ тăвăпăр. Хут пĕлменлĕхе пĕтертĕмĕр. Кăҫалхи ҫураки культтурлă ĕҫшĕн кĕрешни пулса тăҫĕ. Культ поххот пысăк ĕҫ турĕ. Культприкатăсем, пропкруппăсем ҫĕршерĕн, акиткультповоскăсем, культкомпайнсем вуншерĕн, тухса ҫӳрекен ретаксисем ĕҫлерĕҫ. Кăҫал епĕр ҫăн-ҫăн улшăну турăмăр, пысăк тухăҫлă тырпулшăн кĕрешес ĕҫре уйрăмах кăҫал есĕр—Шупаш-

кар районĕсенчисем чăнчăн революци туса хутăр. Мĕн туна пек ĕççене тен халь пурне те тавçăрса та илейместĕр.

Паллах, çак çăнтеру алла çăмăлăн кĕмерĕ. Хытă ĕçлемелле пулчĕ. Ака пĕр тĕслĕх. Йртен те ирхи ака иртертĕмĕр. Çĕнĕ ĕç, опыт çук. Пĕр вăхăтра çак тырăсем шăтса тухасси пирки пăшăрхантăмăр. Есĕр пĕлеттĕр, пирĕн çĕр ытлашши вумай мар, кашни кектар хисепре, вăрлăх та ытлашши мар.

Кулаксем, пупсем, çектантсем, кăсйине партпилет чиксе çÿрекен тăшмансем иртен те ирхи акана урса кайсах хирĕçрĕç. Вĕсем мĕн тĕрлĕ халап сармарĕç пулĕ. Вĕсем иртен те ирхи акана усал йата кăларса ирхи акана йăвантарса антарасшăн, çуракине вăрăма чăсасшăн пулчĕç. Çавăн пек туса, вĕсем çĕршыва выçлăха тăратса хăварасшăн та интервентси вальли çул хатĕрлесшĕн. Пирĕн çакна хытă асăркамалла. Кулаксен вĕсен хăйсен йертсе пыраканĕсем

пур. Вӗсем—эссерсем, меньшевиксем, кадетсем йулашкисем.

Пирӗн колхосникӗсем хӑйсене улталама памарӗҫ. Ҫӗр, колхосникӗсемпе малта пыракан йетиноличникӗсем, кулак хирӗҫнине ҫӗмӗрсе тӑкса ҫуракине ҫӑнласах утарлӑн иртертӗр. Ҫак трипунӑ сингтен тухса калакансем пурте кулак ҫуракине мӗнле хирӗҫни сингтен, унӑн хирӗҫӳне отпор пани сингтен конкретлӑ тӗслӗхсемпе каласа пӑрӑр. Ку ӗнтӗ клас сисӗмлӗхӗ ҫӳллӗ выранта тӑнине кӑтартать. Ентӗ кун сингтен Партти Опкомӗпе правиттӗлствана каласа паратӑп.

Аиҫах лӑсланса ларни пулмалла мар. Тӑшмян сывӑрмасть. Пӗр участкӑра ӗҫ тухман,—тепӗр ҫӗрте тапӑнать. Ҫуракине ӑнӑҫлӑн ирттеретпӗр пулсан, пирӗн умра пысӑк ӗҫсем тӑраҫҫӗ. Ҫум ҫумлас ӗҫ, тырпул пухса кӗртесси, патшалӑха тырӑ тӑратасси. Ҫуракине пысӑк тухӑҫлӑ тырпулшӑн кӗрешесси пӗтмест, пуҫланать кӑна. Кӗрешӳ пӗтмен, кӗрешӳ малалла пырать, ӑна вӗҫне ситермелле. Акнӑ

тырпулла пĕҫĕк-аҫана пăхнă пек пăхса ÿстермелле. Пиҫсе ситнĕ тырпула вăхăтра, пĕр тăккаламасăр пухса кĕмелле. Кулак ҫак уҫаскăсенҫе хăйĕн вилĕмлĕ кĕрешÿне сарса йарассине курсах тăмалла. Ҫавăнпа та сыхă тăрассине татах та татах ÿстермелле.

Сарĕн, Шупашкар районĕн халҫен ҫапла йăла пулнă: вăл йăла—суракине никамран кайра тытăнса, ҫи кайа йулса пĕтерессн. Пысăк тухăҫлă тырпулшăн кĕрешес вырăнне „Йакури куние" те „Микулвăна" кĕтнĕ, вĕсене пăхса суха-акана тухнă. Ҫĕрпÿ районĕнҫи сынсем акса пĕтерсе, ытлашши вăрлăха Йшек пасарне илсе тухассине кĕтнĕ.

Кăҫал есĕр ҫак сийенлĕ йăлана ҫапса ҫĕмĕрсе суракине ир пĕтертĕр. Ҫапла пĕтĕм респуплĕкĕпе кăна ҫеҫ те мар, пĕтĕм Коркки крайĕпе малта пыракан районсем ĕретне кĕтĕр. Е ĕр премн илме тивĕҫлĕ Епĕ Ака комиҫҫи йаҫĕпе сире премн парасси ҫинҫен Опкомпа правиттĕлстварĕ ыйту лартăп (тăвăллăн ал ҫупаççĕ, пĕр ха-

рӑссӑн виҫӗ хутчен „ура“ кӑшкӑрасҫӗ).

Анчах малти ӗретсене тухни сирӗн ҫине пысӑк ӗҫ хурать. Вӑл тата лайӑхрах ӗҫлеме хушать. Ҫӗнтерӳпе пӗрлех ҫитменлӗхсене те палӑртмалла. Ҫитменлӗхсем пур. Сирӗн акмалли тепӗр 10 процчӑн йулнӑ. Ҫине тӑрарах кӗрешнӗ пулсан, пайан куна ака планне пӗтӗмпех тултарма пултарнӑ. Уйрӑм хуҫалӑхсем йулса пыраҫҫӗ. Вырӑнӗ-вырӑнӗпе ӗҫлеме ӳркенни те пур. Майӑн 10-мӗшне ҫуракине пӗтӗмпех пӗтерме пур майсем те пур. Майӑн 9-мӗшӗнче штурм тӑваттӑр, 10-мӗшӗнче йӑлтах тасатса ӗҫе вӗҫлесе пӗтереттӗр (ура хытӑ кӑшкӑраҫҫӗ).

Епӗ уйрӑмах уйрӑм хуҫалӑхсене чӗнсе калатӑп. Тутар респуплӗкӗ пирӗнтен малта пырать. Патша саманинче тутарсене те чӑвашсене пусмӑрланӑ пекех тискеррӗн пусмӑрланӑ. Анчах халь тутарсем малта пыраҫҫӗ. Вӗсен ҫураки вӑхӑтӗнче колхоса 60 пин хуҫалӑх кӗнӗ, пирӗн мӗн пурӗ те 3000 йахӑн кӑна. Тутарсен кол-

лективисатси 70 проҫ. иртет, пирĕн 50 проҫ. ҫук-ха. Пире вĕсенҫен йулма намăс, тата йулма нимĕнле сăлтав та ҫук.

Йетиноличнĕксем хушшинҫе ĕҫлес тĕлĕшпе хăшпĕр улшăну тувă, апҫах вăл пĕрре те ҫителĕклĕ мар. Ензĕр ĕҫпе, примерпе, оппăгпа колхос пĕртен пĕр тĕрĕс ҫул пулни ҫинҫен йетиноличнĕксене ĕнентересшĕн.

Хаҫ ĕнтĕ колхосра кăна пушалăхран ҫăлăнăҫ пуррине хăвăрах кураттăр. Йетиноличнĕксем сухапа ҫĕре тăрмалаҫҫĕ, колхоссем машинпа ĕҫлеҫҫĕ. Колхоссен трактăрсем, МТС. Йетиноличнĕксен вĕсем ҫук, пулмаҫҫĕ те.

Хăш чух кулак акитатсине пула, тепĕр чух хăйсен тĕттĕмлĕхне пула йетиноличнĕксен уйрăм ушкăнĕсем кулаксем хыҫҫăн кайаҫҫĕ. Сăмахран, Тутаркас р-ҫе хăшпĕр йалта йетиноличнĕксем ҫиппишерех уйа тухса кайаҫҫĕ. Апҫах михсенҫе суртри вырăнне ыраш, йе улăмĕ кăна. Пĕр хаплăхран тухса тепринҫен йала кайалла кĕреҫҫĕ (хытă кулаҫҫĕ).

Ĕҫхресҫенĕсем пирки кам тăрă-шать, кам ăшталанать? Партти тă-рăшать, совет влаҫĕ тăрăшать. Аса илĕр-ха, ĕлĕк ҫăвашсем тулă ҫинҫен пĕлмен. Епĕр,— ҫăваша кулаҫ ҫиме вĕрентмелле, терĕмĕр.

— Кулаҫине парăр, ҫисе кăтар-тар,—кулкаларĕҫ хăшĕсем шăл виттĕр.

Епĕр вĕсене хирĕҫ:

— Иамттине мар, хамăр акса тувă тулăран хăпарту ҫиме вĕре-нĕр, тулă акма вĕренĕр,—ответ-лерĕмĕр.

Иртнĕ ҫул пирĕн вуғшар, ҫĕр-шер пăт тулă илнĕ колхоҫнĕксем пулҫĕҫ. Утарнĕк колхоҫнĕксен сĭесĕнҫе Шăнкăртам районĕнҫен килнĕ телекат Кайасăв ҫапла каласа паҫĕ:

—Ҫăтма сук...

—Мĕншĕн вара?—ыйтатпăр.

—Колхосра тырă нумай илтĕм, 300 пăт. Вăл шутран 100 пăт тулă.

Кайасăв ĕлĕк патрак пулса ĕҫ-ленĕ. Колхосра вăл тулли пурнăҫ-па пурăнат.

Епĕ йетинолиҫнĕксенҫен ыйта-

тăп, ăçта вăл пушаран çăлакан çул? Вăл çул—колхос çулĕ. Тăрăшса ҳăй вăйĕпе ĕçлекен йетинолиӟнĕкĕн вырăнĕ колхосра.

Караӟура йалсовеӟĕ кайра пырă! Пайан епĕр ăна çак йышлă халăх умĕнӟе намăслантаратпăр. Катрас йалсовеӟĕ те, Шăнкас йалсовеӟĕ те кайра пыраççĕ. Çак виçĕ йалсоветне пайан халăх умĕнӟе намăслантаратпăр. Намăслантарнипе пĕрлех вĕсене ĕçре пулăшмалла.

Шупашкар хулинӟен ĕлĕк тем тĕрлĕ мăшкăланă. Хаӡ ӗнтĕ Шупашкар ӟăвашсен столитси, ӟăвашсен куӡттурлă ӟентăрĕ. Шупашкар—парттин натси политтĕкĕ тĕрĕссине кăтартакан çимвăл. Сирĕн район Шупашкар йатне илнĕ. Çак йата çӳллĕ тытăр, ăна ан намăслантарăр, ăна ан çĕртĕр.

Колхоçнĕксем! Есĕр, çуракин паттăрĕсем! Есĕр кивĕ йăлана çĕмĕрме пулăшрăр. Ӟи малтан, есĕр тăрăшса ĕçленипе Шупашкар районĕ мала тухрĕ (тĕвăллăн ал çупаççĕ, ҳитă „ура" кăшкăраççĕ). Мункун кунĕсенӟе уйа тухса, уй-

хирте ĕçĕн ђăвђăн паттăрлăхне кăтартрăр (ура кăшкăраççĕ).

Сирĕн хăвăрăн пултаруллăха тата аванрах кăтартмалла. Халех ирхи çĕртмене тытăнмалла, унăн пахалăхшăн хытă кĕрешмелле. Çум çумлас, тырпул пухса кĕртес кампанийе хатĕрленме халех тытăнмалла. Çуракине пĕтерне хыççăн машинсене çинђех йусаса тасатса типĕ çĕре лартмалла. Купаля пĕрлех тырпул пухса кĕртмелли машинсене, ытти хатĕрсене йусаса, тыра пĕрђисене пухмалли йешђĕксене халех туса хатĕрлесе хумалла. Клас кĕрешӳвĕ çак уђаскăсенђе пырат. Клас сисĕмлĕхне хăпартса клас тăшманĕ хирĕçнике хайарран çĕмĕрмелле. Клас тăшманне пулăшаканнсене пур йышши оппортуниссене те таса шыв çине кăларсă, вирлĕ отпор памалла.

Уйхир ĕçсене ытти ĕçсемпе, укçа-тенкĕ пухассипе, лайăх сулшăн кĕрешессипе т. ыт. тађђăн çыхăнтармалла. Пĕр ĕç те кайа тăрса ан йултăр. Кассăн-кассăн ĕçлени ан пултăр.

Пысăк тухăçлă тырпулшăн, тĕреклĕ лашашăн, çирĕп тистсиплинăшăн, малалла! (Нумайăшĕ ал çупаççĕ, ура кăшкăраççĕ. Оркестăр Интернатсионал йурлать. Сывă пултăр пирĕн йуратнă руководитттĕл Петров йулташ!"—лосăнк йан йарать. Каллех хытăн ура кăшкăраççĕ).

# Ҫĕнтерӳ ҫапĕ.

Майăн 8-мĕшĕ. Нимĕнле праҫнĕк те ҫук.

Шупашкар районĕ праҫнĕк тăват.

Праҫнĕк! Ҫăн-ҫăн праҫнĕк! Мĕнле праҫнĕк-ши?!

Польшевикла ĕҫпе ҫĕнтерӳ праҫнĕкĕ. Ҫураки пĕтернине уяв-лаҫҫĕ. Польшевикла хăвăртлăхсен праҫнĕкĕ. Ҫавăнпа та вăл хăват-лă, хастарлă, ҫи савăнăҫлă праҫ-нĕк.

Шупашкар районĕнҫи парторкависатси куляк сапотташне ҫапса ҫĕмĕрсе иртен те ирхи акана кăн-тăр йенҫи районсемпе пĕр тан тухрĕ. Ку акана кăтартулла ир-терҫĕ. Майăн 8-мĕшне тĕш тырă-сене, пăрҫа тавраш̆ĕсене акса пĕ-тернӗ.

22.500 кектар акнă. Анҫах пĕ-тĕмпех мар-ха. Пĕтĕм ака плане 90 проҫ. тултарнă. Тата

2000 гектар ытларах паранкă лартмалла.

700 гектар ытларах пахҫа ҫимĕҫсем лартмалла.

200 гектара йахăн хуратул акмалла.

*
* *

Майăн 8 мĕшĕнҫе Шупашкар районĕн ҫентăрĕнҫе—Кӳкеҫре мĕн пулнине пĕтĕмпе ҫырса пама нимĕнле май та ҫук. Куна пек ҫаплă йапала Шупашкар районĕнҫе халиҫҫен пулман тесен те ытлашши пулмасť. Кӳкеҫе мĕн пур районран колхоҫнĕк-утарнĕксем, колхоҫнĕтсĕсем, уйрăм хуҫалăхлă ĕҫхресҫенĕсем, комуниссем, комсомолĕссем, пионерсем пухăннă.

Мĕн пурĕ 5000 ҫын район ҫентăрĕнҫе миттĕнкра. 5000 ҫын!

Йĕркесĕр ҫыхăнса тулни ҫук. Кашни потрайон пĕр колоннă. Кашни колхос хĕрлĕ флакпа. Хăшĕсем йулавутпа, хăшĕсем тăрантаспа, нумайĕшĕсем ҫуран пынă. Каҫҫисемпе хĕрĕсем шукĕл тумланнă. Хăшĕсем ут таврашĕсене пурҫăн хăйусемпе, пурҫăн муҫкăсемпе илемлетсе пĕтернĕ.

Тăрантас хыçăнҫе хĕрлĕ йалав. Кашни тăрантас çинҫе пĕр йе икĕ кармуҥ, параппан. Йулавутлисем хушшинҫе те кармуҥсем сахал мар. Кармуҥсене, параппансене шутласа та кăларăс çук.

Йармăккăна халăх нумай пухăнаҭ. Анҫах кунта йармăккă пек те мар. Кунта калле-малле йĕркесĕр кунса çӳрекенĕсем сахал. Кунта йĕрке, колоннăсем. Кашни харпăрхăй вырăнĕнҫе.

Миттĕвк вырăнĕ—вăрман уçланки. Уçланкă йуман вăрмана кăритор пек шăтарса кĕвĕ. Симĕс çерем. Пĕр пуçĕнҫе стсенă. Стсенăпа йунашар Ленин потреҫĕ. Вăл стсенăпа пĕр тан, пĕр виçĕ метр çӳлĕш, сарлакăш те çавăн ҫухлех. Ана йĕри тавра ҫăрăш тураҫĕсемпе, хĕрлĕ хăмаҭсемпе, лосăнксемпе илемлетнĕ. Стсенă çинҫе, унăн ăшăнҫе йĕри тавраж лосăнксем. Сылтăм йенҫен стсенăран кăшт маларах трипунă. Трипунă тавра каллех лосăнксем. Трипунăпа йунашар крусовик-автомопил, ун çинҫе тухховăй оркестăр. Вăл йатăрласа Шу-

пашкартан пынӑ. Отсенӑн икӗ йенҫе шӑитсем. Выставккӑ. Кувта тем те пур. Колхоссен, прикатӑсен ҫтена хаҫаҫӗсем, уйрӑм пӳлеттенсем, утарнӗксен сӑнсӑпаҫӗсем, кахалсен потреҫӗсем. Вӗсенпе йунашарах пӗҫӗк йешҫӗксем. Вӗсенҫе иртен те ир ӑкнӑ тырӑсен калҫисем. Кашни йешҫӗк тӑрӑнҫе колхос йаҫӗ, хӑш ҫыслара акнине, сӳреннне йе ӑшӑх сухаланине кӑтартнӑ. Калҫасем пурӗш те аван, парка, сип-симӗс.

Еретӗн ӗретӗн скамейккӑсем лартса тухнӑ. Уҫлавкӑ варӗнҫе Ишек колхосӗн кулӑткомпайнӗ. Аиттенӑ карнӑ. Ратио калаҫ. Унтан инҫех те мар кӗнеке сутти.

„Хӑҫҫан тума ӗлкӗркӗ ҫак пысӑк ӗҫе"—ӑша шухӑш кӗрет. Ҫӑн та мӗн вӑхӑтра ӗҫленӗ? Кӳкеҫре вӑй ытлашшипех мар. Ҫынсен пушӑ вӑхӑт пулман. Мӗн пур вӑхӑт акара пулнӑ. Ӳркенмен ӗҫлеме, ҫӗр ҫывӑрмасӑрах ӗҫленӗ. Ӗҫленӗ—пулнӑ.

Миттӗнк тума илемлӗ вырӑн суйласа илнӗ. Халӗ йумансем ҫулҫӗ кӑларман-ха. Вӑрман симӗс

пӗркенҫӗкпе витӗнмен-ха. Ҫапах та вырӑн илеймӗ. Ҫулла кунта мӗн пек илемлӗ пулӗ.

*
* *

Шупашкар районӗнҫи ӗҫхалӑхӗ хӑйсен ҫӗнтерӳне уйявлама пухӑннӑ. Ҫак ҫапла митӗнка пухӑннисенҫен кашнийех пӗтӗм кӑкӑрпа савӑнӑҫлӑн сывлать. Ма сывлас мар? Колхоссем ҫултан ҫул тӗрекленсе пыраҫҫӑ, колхоҫнӗксен пурнӑҫӗ аванланса йусанса пырать. Мӗншӗн тесен, парттипе правиттӗлствӑ колхоссене пур майсемпе те пулӑшса пырать, колхоссене тӑшмансенҫен сыхлать. Колхоҫнӗксен умӗнҫе пуласлӑх тата пысӑкрах.

—Ҫывӑхри вӑхӑтрах пур колхоҫнӗксене те пуйан пурнакансем тумалла,—вӑт мӗнле сатаҫ лартрӗ комуниссен парттийӗ. Колхоҫнӗксем ӑна ӗнланса илнӗ, ҫав сатаҫа пурнӑҫласси шӗн кӗрешеҫҫӗ те.

—Епӗр кунта хамӑр ӗҫпе хаваслансма пухӑннӑ. Ҫак вӑхӑтра капиталисла патшалӑхсенҫе хресҫенсем мӗнле пурнаҫҫӗ-ши?—

хăйĕнҫен хăйĕ ыйтать пĕр вать колхоҫнĕк.

Кăна кирĕҫ ак ҫакна каласан та ҫитмелле. Кăпиталисла ҫĕршывсенҫе пуршуйсем, ҫĕр улпуҫĕсем хуҫа пулса тăние пула сынсем вунщар мĕлйунăн выҫă вилĕм умĕнҫе тăраҫҫĕ.

Йулашки икĕ ҫул хушшинҫе кăна Амерĕкре тулă акни 10 проҫ., пĕр иртнĕ ҫулта кăна Австралире тырă акни 15 проҫ., Румынире 17 проҫ. ҫакнă. Амерĕкре ҫумăр ан пултăр тесе кĕл тăваҫҫĕ.

Керманире 7 ҫĕр улпуҫĕ аллинҫе 772 пин кектар ҫĕр, ҫав вăхăтрах 5 мĕлйун хресҫенсен 1.588 пин кектар кăна. Пĕр улпут 350 пин хресҫен усă курнă ҫĕр ҫухлĕ ҫĕрпе усă курать.

Кăпиталиссем мĕншĕн вăрă ҫумăр ан пултăр тесе молепĕнсем тăваҫҫĕ.

„ Мĕншĕн тесен ҫимĕҫсем ытлашши пулни кăпиталиссен усламне ҫакарать, усламсем ап ҫакҫăр тесе ҫавăн пек тăваҫҫĕ вĕсем. Ҫимĕҫсем ĕҫхалăхне ну-

майран мар апла пулаť, çук, ĕçхалĕхĕ выçăпа аптраť“

(Какановиҫ).

Пирĕн те ĕлĕк, патша самани ҫух хресҫенсен пурнăçĕ çавăн пек пулнă. Халҫ ĕнтĕ хресҫенсенҫен нумайĕшĕсем ĕлĕкхи выçă, пусмăрлă, мăшкăллă пурнăçа маннă.

Колхосра хресҫенсен пурнăçĕ тĕпренех урăхланҫĕ. Вĕсем колхосра çăкăр-тăварлă пулса тăҫĕç, çителĕклĕ тулли пурнăçпа пурăнма тытăнҫĕç. Ăна кам туса паҫĕ. Кăпиталис-и? Пуршуй-и? Кулак-и? Çук, вĕсем мар. Вĕсен ĕçĕ вăл, ĕçхалăхне пусмăрта, тĕттĕмре, ҫуралăхра усрасси, ĕçхалăхĕн йунне сăрăхтарасси, ĕçхалăх шуҫĕпе кÿпсе карăнасси пулаť.

Ĕçхресҫенĕсем пролеттариатпа таҫă çыхăву тытса, пролеттариат унăн аванкарҫĕ комуниссен партти йертсе пынипе кăна хăйсен пурнăçне аванлатма пултарҫĕç.

Кÿкеçри хăватлă миттĕнк çĕнĕ пурнăç, колхос стройĕ тĕреклесе пынине темонстратсилерĕ.

Колхоссем сотсиалисăмлă çул

çине çирĕп тăвĕç. Колхос хрес- ченĕн ӳтпе йунне сăрхăннă. Хрес- чексен вумай пайĕшĕн колхос-тă- ван, чи çывăх оркаписатси. Пайан колхосра тăмаппнисем те ыран колхосра пулаççĕ. Уйрăм хуçалăх патне кайалла таварăнма çул çук. Партти райкомĕн çекреттарĕ Алек- çейĕв йулташ миттĕвк пухăнса çитни çинчен телефон тăрăх Оп- кома пĕлтерчĕ.

Автомопил çинче партти Оп- комĕн çекреттарĕ Петров йулташ, Опком членĕсем Сахарăв, Иванов тата Клуховски йулташсем.

Машин тапранчĕ, Кӳкеçе. Мит- тĕнка. Петров йулташ çул тăрăх уйхирсем çине пăхса пырат. Акса пĕтернĕ. Акманни сайра-хутран кăна пĕр ана чăсăлса выртат. Йе- тинолиçнĕксен ависем, акса пĕ- терме ĕлкĕреймен.

*
* *

Чăн та миттĕвк пухăнса çитнĕ. Миттĕнка шутсăр вумай пухăннă. Миттĕнка пухăннисемпе пĕрле са- вăнатăн, хаваслапатăн. Çак вăйлă, хăватлă темонстратси çине пăхсан хĕпĕртенипе çанçурăм сăркăлтат-

са кайат. Ҫакна кура хăвассăн темскер кăшкăрасшăн, сăмах хă-йех пыр патне капланса килет.

Кăмантирсем пур коловвсене те йĕркелесе тăратаççĕ. Хĕрлĕ йалав-сем! Хĕрлĕ йалавсем! Вĕсен шуҫĕ те ҫук пулĕ. Нумайĕшĕсĕм ҫине „Пирĕн колхос ҫуракине 110 проҫ. тултарнă", йе „Пирĕн колхос 120 проҫ. тултарнă", тесе ҫырнă.

Трипунă синҫе Петров йулташ, райком ҫекреттарĕ Алекҫейев йул-таш, Опком уполномоҫҫĕннăйĕ Саххарăв йулташ, Опком акит-маспайĕн пуҫлăхĕ Саххарăв йул-таш т. ыт. те.

— Ҫуракине пĕтервипе пухăнвă миттĕвка уҫнă шутлатăп,—Алек-ҫейĕв йулташ миттĕвка уҫат. Ор-кестăр „Интернатсионал" йантра-тат.

— Пирĕн ҫĕнтерўн пăхалăхĕ ҫуракине васкавлăн пĕтерниҫе кăна мар. Вăл, ҫи малтан, район-ра тĕпрен улшăну туниҫе. Ытти ҫулсене епĕр ҫуракине хăҫан ты-тăннă, хăҫан пĕтернĕ? Ытти район-сенҫен ҫи кайа йулса акнă, ҫа-вăнпа пирĕн тыра тухăҫĕ те сахал

пулнӑ,—пуҫлат хӑйӗн сӑмахне Алексҫейӗв йулташ.

Тӗрӗс калатӑн, Алексейев йул., тӗрӗс. Иртнӗ ҫулсенҫе Шупашкар районӗ (т. ыт. хӑш-пӗр районсем те) Йакури куние те Микулнӑна кӗтнӗ. Кӑҫал есӗр ҫак кивӗ хӑнӑхуга тӗпренех ҫӗмӗртӗр. Пайан пухӑнлӑ хӑватлӑ миттӗнк та ҫак ҫӗнтерӳве куҫкӗскинҫи пекех уҫҫӑмӑн кӑтартат.

Алексҫейев йулташ хыҫҫӑн райҫӗрпай пуҫлӑхӗ Йаккӑвлӗв йул. Респуплӗкри ака комиҫҫине раппӑрт парат. Унтан малта пыракан колхоссен, прикатӑсен претставиттӗлӗсем раппӑрт тытаҫҫӗ, саламлаҫҫӗ.

— Пӗр пытармасӑр каламалла. Ӗлӗк епӗр Йаккури куние тата Микулнӑна кӗтсе ларнӑ. Кӑҫал апрелӗн 3-мӗшӗнҫе тухса 7 кектар ҫинҫе иртен те ирхи ака туса хӑвартӑмӑр. Апрелӗн 11-ҫе массӑлӑ акана тухрӑмӑр, апрелӗн 17-ҫе пӗтӗмпех акса пӗтертӗмӗр. Иртен те ир акни пӗтет, терӗҫ кулаксем. Вӗсем колхоҫнӗксене пӑтратма пӑхрӗҫ. Пирӗн калҫасем хӑйсе-

мех кулака вирлӗ отпор парассӗ, вӗсем парка, сип-симӗс. Ав выставкӑра вӗсем, хӑвӑр куҫпа пӑхма пултараттӑр,—тӗллесе катартать „Марсселъски“ колхос претҫетаттелӗ Йекорӑв.

„Осоавиахим“ колхосӗн претҫетаттелӗ Хапаров йулташ трипувӑ синҗе. Вӑл краштӑн вӑрҫинъе утлӑ раҫветкӑн наҗҗалънӗкӗ пулнӑ. Сӑмаха пӑт татса калать.

—Апрелӗн 6 җе иртен те ирхи акана тухса 7 кектар вырӑнне 10 кектар тулӑ акса хӑвартӑмӑр. Клас тӑшманӗсем пӗтӗм район тӑрӑх „Кошкӑ колхосӗн иртен те ирхи ака пӗтнӗ, виҫӗ лаша ӳксе вилнӗ“, текӗ йат сарҗӗҫ. Ирхи ака калҗисем выставккӑра, пирӗн утсем ак кунта,—тӗллесе кӑтартать Хапаров йулташ трипувӑран сылтӑм йенелле.—Пирӗн лашасем ҫуракине кӑна мар, халъ тесен халъ Хӗрлӗ конитсӑ ӗретне тӑма хатӗр... Хапаров йулташа сӑмах пӗтерме памаҫҫӗ. Темиҫе пинлӗ миттӗнк ҫил тӑвӑл пек ал ҫупса йарать, пӗр саспа виҫӗ хуҗҗен „ура“

кăшкăрат. „Ура“ сăмах Кÿкеç вăрмавĕ тăрăх йактратса кайат.

„Осоавиахим“ колхосăн лашисем ҫăн та питĕ тĕреклĕ, шултра, хĕллехи тĕке тăкса пĕтерне, çăмарта пек ҫăп ҫăмăр, хĕвел синҫе кавтăк пек йăлтăртататççĕ. Ав вĕсем, миттĕнкăн сылтăм йенҫе. Ĕзĕрлевĕ йуланлă утсем. Хĕрлĕ кăвалери пек капăр, хăватлă тăраççĕ вĕсем.

Трипунă çинҫе Ваҫҫалкасси колхосĕн прикатиршши Сороккĕвă йул. Вăл пĕр 45 çула çитнĕ пулмалла.

— Ĕлĕк епĕр çакăн пек тухма пултарна-и? Хĕрарăмсем, итлĕр! Сире калатăп епĕ. Çук, кун пекки синҫен тĕллеме те пултараймап. Ĕлĕк хĕрарăм çын шутĕнҫе пулман. Колхос органисатсилерĕмĕр. Çăвăл пулмарĕ ăва органисатсилеме. Кулаксем вилĕм кĕрешрĕç, мĕнле пăтратмарĕç вĕсем пире, уйăрăмăвах пире хĕрарăмсене. Вĕсене пăхăнмарăмăр, колхос турăмăр-турăмăрах, колхоспа кулака таптаса пăрахрăмăр. Пайан епĕ пысăк çĕнтерупе пĕтĕм ҫĕререн

саваннатăп. Есĕр, кунта пухăннă хĕрарăмсем! Епĕ сирĕн шухăша каласа паратăп пулĕ, тесе шутлатăп. Сывă пултăр комуниссен партти, уна йертсе пыракавĕ Сталин йулташ! Сывă пултăр Петров йулташ!—пĕтерет хăйен сăмахне Сороккĕнă.

Иҫĕ кусĕнҫен кус шывĕ йухса анаť.

— Хурланнипе мар, хĕпĕртенипе, пĕтĕм ҫĕререн саваннипе куç шывĕ тухрĕ,—ăнлантарса параť Сороккĕнă йул. трипунă çинҫен ансан.

Кунта ҫылай колхосран, прикатăсенҫен тухса каларĕç. Ҫăкăр комсомол йаҫейккин çекретарĕ Васçилйĕв йул. Шăнкас колхосне пукçира илсе икĕ кун хушши ĕçлени çинҫен, Шăнкас колхосĕ комсомол йаҫейккине премии пани çинҫен каласа паҫĕ. Ишекри колхос, унăн уйри продкруппи хăйсен ĕçĕсем çинҫен каласа паҫĕç. Ишек колхосĕн претçетаттĕлне Çмирнов йул. хытă ал çупса йышăнҫĕç.

Опком уполномоҫҫăннăйĕ Сах-

харăв йул. тухса каларĕ. Вăлрайкомпа, колхоçнĕксемпе, ĕçхалăхпе пĕрле çĕнтерӳпе аслăн сывлаť.

Йулашкинҫев, Опком çекреттарĕ Петров йул. сăмах калама пуçларĕ. Петров тухса тăрсан вумайҫҫен ал çупса хытă „ура" кăшкăраççĕ. Оркестăр саламлă сăвă (Туш) каласа илет. Ку вăл, ĕçхалăх масси пирĕн партти орканисатси авторитетҫĕ пысăккине, ĕçхалăх масси комуниссен партти тавра таҫă пĕтĕçнине кăтартаť.

Петров йул. Шупашкар районĕн çитĕвӳсене палăртса çакăн пек каларĕ:

— Шупашкар районĕн çĕнтерӳвĕ çимҫен партти Опкомĕпе правиттĕлстваăна каласа паратăп. Шупашкăр районĕ кăçал преми илме тивĕçлĕ.

Ку сăмахсем хыççăн мĕн пуллине каласа пама йăвăр. Тăвăллăн ал çупни, ура кăшкăрни, пĕтĕм ӳтпӳпе хавасланни, параппăнсен сасси пур те пĕрле.

— Авҫах çитĕнӳпе лăпланса ларни пулмалла мар,—пуçлаť, Петров йул.—Пуç çавăрăнса кайни

пулмалла мар. Сирӗн хаԓ плана тултарма тата 10 прођ. акмалла. Есӗр ҫине тӑрарах ӗҫленӗ пулсан, пайан пӗтӗм плана тултарма пултарнӑ. Ку сирӗн ҫитменлӗх. Анђах вӑл сирӗн паттӑр ҫӗнтерӳве хупласа лартма пултараймасть. Сирӗн хаԓ паранкӑ, пахђа ҫимӗҫсем лартса пӗтермелле. Халех ирхи ҫӗртме тума тытӑнмалла, ҫум ҫумлас, тырпул пухса кӗртес кампанисене хатӗрленме халех тытӑнмалла. Пысӑк тухӑҫлӑ тырпулшӑн, тӗреклӗ лашашӑн кӗрешмелле, тӑрӑшса ӗҫлемелле. Вара ӗҫ тухать.

Миттӗнк пӗр саспа „пур" тесе ответлерӗ. Петров йул. сӑмахӗ хыҫҫӑн темиҫе ҫӗр сас пӗрле „Ову пултр пирӗн йуратнӑ Петров й.!" кӑшкӑрни вӑрман тӑрӑх йан карӗ.

Миттӗнк хыҫҫӑн парат. Парат пӗтнӗ хыҫҫӑн вӑйӑ, ташӑ, хор т. ыт. Ӑста пӑхнӑ унта ҫынсен ушкӑнӗ. Ушкӑн вырӑнђе кармуң сасси. Ташлаҫҫӗ. Кунта йаш кађђисем те, хӗрупраҫӗ те, сухаллисем те, хӗрарӑмсем те. Ташлаҫҫӗ, савӑнса ташлаҫҫӗ.

Халӑх кӑмиссарӗсен канашӗн

претҫетаттĕлĕ Токҫин Й. ҫул ҫинҫе машин пăсăлнă пирки миттĕне пĕтнĕ ҫĕре тин ĕлкĕрҫĕ. Вăл вылтăвккăсене т. ыт. -пăхса ҫурерĕ, уйрăм колхоҫнĕксемпе калаҫса илҫĕ. Миттĕнкра „Социалистическое земледелие" тата „Горьковская коммуна" хаҫатсен преставитĕлĕсем пулҫĕҫ. Вĕсем питĕ тĕлĕнҫĕҫ.

Шупашкар районĕн ҫак ҫĕнтерӳве ҫирĕплетсе тата аванрах ĕҫлессишĕн тăрăшмалла. Ҫак хастарлăха кулак сапоттăшне тĕппех ҫапса ҫĕмĕрме тата ҫирĕпрех мопилисатсилемелле.

Шупашкар районĕн оппăҫĕ хĕрлĕ ака туйне иртерме пулăшмалла.

---

Редактор Чувашгиза М. Костин. Технический редактор А. Быков. Послано в производство 11-V — 1933 г. Сдано в набор 13-V—1933 г. Подписано к печати 20-V—1933 г. Уполномоченный Чувашлита № 1104. Чувашгиз № 104. Заказ № 514. Тираж 3000 экз. Ст. ф. бум. 72×105, об'ем 1 п. л.

Типография Чувашгиза № 1, г. Чебоксары